27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ДЕКАБРЬ
20
ЮНКУН
248(6743) №

# Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

## Сталин юлташăн доклачĕпе приказне вĕренес ĕçе большевикла организацилер!

Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен тунă историллĕ докладпа приказ пирĕн партипе пĕтĕм совет халăхĕн пурнăçĕнче пысăк событи пулса тăраççĕ. Хăйĕн доклачĕпе тата приказĕпе пирĕн аслă çулпуç марксизм-ленинизм наукине тата теорине калама çук пуянлатрĕ.

Сталинăн пуриншĕн те ăнланмалла аслă сăмахĕсем халăха мобилизацилекен пысăк вăй пулса тăраççĕ. Унăн кашни сăмахĕ совет çыннине хавхалантарать, ĕçре çĕнĕ çĕнтерӳсем тума вăй парать, малашне татах та паттăртарах ĕçсем тума чĕнет. Аслă Сталинăн сăмахĕсене пирĕн Тăван çĕршыври мĕнпур ĕççыннисем пĕтĕм чĕререн савăнса кĕтсе илчĕç. Рабочисем, колхозниксем тата интеллигентсем юратнă çулпуçа фронтшăн тата Тăван çĕршывшăн ытларах вăй хурса ĕçленипе ответлеççĕ. Сталин юлташăн историллĕ доклачĕ çине ответлесе, çулталăк программине срокчен пурнăçа кĕртессишĕн тата хĕл вăхăтĕнче ăнăçлăн ĕçлессишĕн пыракан социализмлă ăмăрту хумĕ пĕтĕм çĕршывĕпе сарăлса кайрĕ. Колхоз хресченĕсем, çулпуç доклачĕ çине ответлесе, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли хăйсен обязательствисене срокчен пурнăçа кĕртеççĕ, çуракине хатĕрленес ĕçсене вăйлатаççĕ.

Пирĕн партипе совет халăхĕ Сталин юлташăн доклачĕпе приказне малашнехи ĕçсен программи вырăнне хурса, гитлерла Германие таткăланах çĕмĕрсе тăкассишĕн, пирĕн Тăван çĕршывăн çĕнтерĕвĕшĕн тата чапĕшĕн пыракан кĕрешӳ программи вырăнне хурса йышăнчĕç. Парти, совет, комсомол, профсоюз тата хуçалăх организацийĕсен пĕтĕм ĕçне халĕ Сталин юлташăн доклачĕпе приказĕнчен тухса тăракан задачăсене пурнăçа кĕртес май туса пымалла. Пуринчен малтан, çулпуçăн çак историллĕ докуменчĕсене коммунистсемпе комсомолецсен, пирĕн пĕтĕм интеллигенцин тарăнăн вĕренсе пĕтмелле, вăл документсем çинчен кашни ĕççыннине ăнлантарса памалла.

Республикăри пиншер коммунистсемпе комсомолецсем тата интеллигентсем халĕ Сталин юлташăн доклачĕпе приказне харпăрхăй тĕллĕн тата ятарласа тунă кружоксенче вĕренеççĕ. Çулпуç докладне вĕренекенсем валли чылай çĕрте лекцисем, докладсем, консультацисем, юлташла калаçусем туса ирттернĕ. Анчах та, йышăнас пулать, хăшпĕр хуласемпе районсенче, уйрăмăнах Ишлей, Çĕрпӳ тата Комсомольски районсенче, Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен тунă докладпа приказа халăха ăнлантарса парас тата вĕренес ĕçе çителĕксĕр организациленĕ-ха. Çав районсенчи чылай предприятисенче, колхозсенче тата учрежденисенче юлашки вăхăта çитиччен Сталин юлташăн доклачĕпе приказне сӳтсе-явас тĕлĕшпе пухусем туса ирттермен.

Çак районсенче партипе совет тата комсомол кадрĕсем Сталин юлташăн доклачĕпе приказне тарăнăн вĕренес ĕçе çителĕксĕр организациленĕ. Çав документсене харпăрхăй тĕллĕн вĕренекенсен ĕçне тĕрĕслесе тăмаççĕ. Çулпуç доклачĕпе приказне вĕренме организациленĕ кружоксем нумайĕшĕ ĕçлеме тытăнман. Партипе комсомолăн пуçламăш организацийĕсем чылайĕшĕ вулав çурчĕсемпе колхоз клубĕсенче ĕççыннисене Сталин юлташăн докладне ăнлантарса парас ĕçе тивĕçлипе организацилемен. Хуласемпе районсенчи парткабинетсем Сталин юлташăн доклачĕпе приказне вĕренес ĕçе организацилеме пуçламăш парторганизацисене çителĕксĕр пулăшаççĕ, лекцисемпе докладсем тата консультацисем сахал туса ирттереççĕ.

Çак çитменлĕхсем вĕсем акă мĕн çинчен калаççĕ: ВКП(б) Ишлей, Çĕрпӳ, Комсомольски райкомĕсем çулпуçăн историллĕ докуменчĕсене вĕренес тата халăха ăнлантарса парас ĕç çав тери пысăк вырăн йышăнса тăнине кирлĕ пек ăнланман, çавна пула вĕсем вăл ĕçе иккĕмĕш вырăнта тăракан çынсене шанса панă. Пирĕн республикăри малта пыракан предприятире—Куславкка комбинатĕнче те çак тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем пур.

Çак çитменлĕхсене çывăх вăхăтрах пĕтерес пулать. Сталин юлташăн доклачĕпе приказне вĕренес ĕçе парти горкомĕсемпе райкомĕсен пĕрремĕш секретарĕсен хăйсем ертсе пырас пулать. Çав документсене партипе совет тата комсомол активĕ, интеллигенци харпăрхăй тĕллĕн вĕренес ĕçе организацилесси çине уйрăмăнах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Вĕсем валли парткабинетсенче, предприятисенче, колхозсенче тата учрежденисенче ятарласа лекцисем, докладсем туса памалла, консультацисемпе юлташла калаçусем ирттермелле. Çак ĕçри лайăх опытсемпе пĕр-пĕрне паллаштармалла тата вăл ĕç мĕнле пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла. Сталин юлташăн доклачĕпе приказне вĕренме организациленĕ кружоксен занятийĕсене пĕр сиктермесĕр ирттермелле, вĕсене ертсе пыма пултаруллă та ĕçре тĕрĕсленнĕ юлташсене уйăрмалла. Кашни занятин умĕнех кружоксене ертсе пыракансен инструкциллĕ семинарĕсене ирттермелле.

ВКП(б) горкомĕсемпе райкомĕсен тата пуçламăш парторганизацисен Сталин юлташăн доклачĕпе приказне халăхăн пур сийĕсем патне те çитерес тесе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла. Ĕççыннисем хушшинче ăнлантару ĕçне туса пыма пултаруллă агитаторсене уйăрса, вĕсене цехсем, бригадăсем, звеносем, урамсем тата çуртсем çумне çирĕплетмелле, вĕсен ĕçне куллен тĕрĕслесе тăмалла.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ сĕннĕ тăрăх, парти райкомĕсен ялсемпе колхозсене лекцисем тата докладсем ирттерме 2—3 кунлăха лекторсемпе докладчиксене ямалла. Вăл юлташсен, ялсовечĕсемпе колхозсен ĕçĕпе тĕплĕнрех паллашса, Сталин юлташăн доклачĕпе приказне вĕренес тĕлĕшпе вырăнта практикăллă пулăшу памалла. Вулав çурчĕсемпе клубсем халăх хушшинчи массăллă-политикăллă ĕçĕн чăн-чăн центрĕсем пулса тăмалла. Вĕсенче тăтăшах лекцисем, докладсем, калаçусем пулса иртмелле.

Сталин юлташăн доклачĕпе приказне вĕренесси тата халăха ăнлантарса парасси —политикăллă пысăк ĕç пулса тăрать. Парторганизацисен çак ĕçри опытне тăтăшах сарса пымалла. Ку енĕпе вара республикăри тата районри хаçатсем пысăк вырăн йышăнса тăмалла.

Сталин юлташ хăйĕн докладĕнче пысăк задача лартрĕ: пирĕн Хĕрлĕ Çарăн, союзниксен çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, фашистла нимĕç çарне çĕмĕрсе тăкас ĕçе вĕçне çитермелле, фашистла тискер кайăка унăн йăвинчех çапса вĕлерсе, Берлин çине çĕнтерӳ ялавне çĕклесе лартмалла. Çак тĕп задачăна пурнăçа кĕртме пирĕн халĕ халăхăн пĕтĕм вăйне мобилизацилемелле. Сталин юлташăн доклачĕпе приказне вĕренни тата халăха ăнлантарса пани вара пире кулленхи ĕçри çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме, умра тăракан задачăсене ăнăçлăн татса пама пулăшать.

Сталин — Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсен тусĕпе тăванĕ. Вăл вырăсшăн та, украинецшăн та, таджикшăн та, эстонецшăн та, чăвашшăн та тата ыттисемшĕн те —пирĕн çĕршыври пур халăхсемшĕн те чи çывăх тăван. Çавăнпа та пирĕн çĕршыври ĕççыннисем Сталин юлташа вĕçĕ-хĕррисĕр юратаççĕ, ăна нумай-нумай çулсем пурăнма сывлăх сунаççĕ. Ыран Сталин юлташ 65 çул тултарать. ССР Союзĕнчи мĕнпур ĕççыннисемпе пĕрле, чăваш халăхĕ хамăрăн аттемĕре тата тусăмăра Сталин юлташа совет халăх телейĕшĕн нумай çулсем пурăнма ырă сунать тата ăна пысăк салам калать.

Коммунистсен партийĕ тавра, пирĕн çулпуç тата учитель Сталин юлташ тавра татах та таччăнрах пĕтĕçер!

## Комсомолăн Шупашкар хулинчи активĕн пухăвĕ

Çак кунсенче комсомолăн Шупашкар хулинчи активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ.

Пухура Сталин юлташăн Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен тунă докладне вĕренни мăл комсомолăн хулари организацийĕ умĕнче тăракан задачăсем çинчен ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ Романова юлташ доклад туса пачĕ.

— Аслă Сталинăн доклачĕпе приказне, — терĕ Романова юлташ, — совет халăхĕ гитлерла Германие тĕпĕ-йĕрĕпех çĕмĕрсе тăкассишĕн тата хамăрăн Тăван çĕршыва çĕнĕрен мирлĕ строительство йĕркине кӳрассишĕн кĕрешмелли ĕç программи вырăнне хурса йышăнчĕ. Çав историллĕ документсем пирĕн çĕршыври халăхсем хушшинче производствăллă тата политикăллă çĕкленĕвĕн çĕнĕ хумне пуçарса ячĕç. Шупашкар хулинчи комсомолецсемпе çамрăксем, Сталин юлташ çамрăксен ĕçне пысăка хурса хакланипе хавасланса, халĕ хăйсен пĕтĕм вăй-хăватне фронта пысăкрах пулăшнă çĕре параççĕ. Комсомол организацийĕсен пĕтĕм ĕçне халĕ Сталин юлташ кăтартса панисене пурнăçа кĕртессипе çыхăнтарса пымалла. Çакна тума Сталин юлташăн доклачĕпе приказне тĕплĕн вĕренмелле, аслă çулпуçăн сăмахĕсене кашни комсомолецпа çамрăк патне çитермелле.

Малалла Романова юлташ комсомолăн хулари организацийĕ Сталин юлташăн доклачĕпе приказне вĕренес тĕлĕшпе тунă ĕçсем çинчен каласа парать. Комсомолăн нумай организацийĕсенче çулпуç доклачĕпе приказне вĕренес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçленĕ вăхăтрах хăшпĕр организацисенче докладпа приказа вĕренес ĕçе гăваха яраççĕ. Ун пек организацисен шутне «Росглаввино» çумĕнчи, пĕрремĕш номерлĕ типографири, Атăл леш енчи электростанцири комсомол организацийĕсем кĕреççĕ.

Сталин юлташăн доклачĕпе приказне тĕплĕн вĕренни май, хулари çамрăксене производствăра çĕнĕ çитĕнӳсем тăвассишĕн —1944-мĕш хуçалăх çулне кăтартуллăн вĕçлессишĕн тата 1945 çулхи плана ăнăçлăн тултарассишĕн кĕрешме мобилизацилемелле. Предприятисенче комсомолецсемпе çамрăксен бригадисен йышне ӳстермелле. Комсомолăн шкулсенчи организацийĕсен дисциплинăна çирĕплетме тăрăшмалла, çамрăк ăрăва воспитани парас тĕлĕшпе учительсене тимлĕн пулăшса пымалла.

Романова юлташ комсомолăн шалти ĕçĕн ыйтăвĕсем çинче тĕплĕн чарăнса тăрать. Комсомолăн кашни организацийĕ хăйĕн речĕсене ӳстерме тăрăшмалла, союзра тăман çамрăксемпе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе, вĕсене политика тĕлĕшĕнчен воспитани памалла. Апла пулин те, кăçал 11 уйăх хушшинче комсомолăн хулари организацийĕ çителĕксĕр ӳсе пынă. Комсомол ретне иртнĕ çулхи вунă уйăх хушшинчи хисепрен 541 çын сахалтарах илнĕ. Пир-авăр тата чăлха фабрикисенчи, тир-сăран комбиначĕнчи, Ленин ячĕпе тăракан фабрикăри, Академи театрĕнчи тата ытти хăшпĕр учрежденисемпе предприятисенчи организацисем пачах та çителĕксĕр ӳсеççĕ. Стройтрестри тата чугун çул станцийĕнчи комсомол организацинче пухусем сайра хутра кăна ирттереççĕ. Шупашкар хулинче çамрăксен культурăллă канăвне те çителексĕр йĕркеленĕ. Хулари 95 организацирен 22-шĕ кăна художествăллă пултарулăх кружокĕсем организациленĕ. Хулара çарпа физкультура ĕçне те кирлĕ пек йĕркелемен-ха. Çамрăксене йĕлтĕр спортне сахал хутшăнтараççĕ.

— Халĕ, Отечественнăй вăрçăн юлашки тапхăрĕнче, Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕ умĕнче пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ, — тет Романова юлташ юлашкинчен.— Аслă Сталин лартнă задачăсене пурнăçлама Çĕршывăн мĕнпур вăйĕсене пĕтĕçтерни кирлĕ. Çавăнпа та комсомолецсемпе çамрăксен Ленин-Сталин партийĕ тавра тата та таччăнрах пĕтĕçсе, вăйсене икĕ-виçĕ хут ӳстерсе ĕçлесе, ирсĕр тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерсе тăкма Хĕрлĕ Çара ытларах пулăшас пулать.

Романова юлташăн доклачĕ тăрăх прените Коган, Панина, Михайлов (Арçын ачасен 1-мĕш номерлĕ шкулĕ), Васильева (Ялхуçалăх институчĕ), Цветкова (Хĕрачасен 1-мĕш номерлĕ шкулĕ), Павлов (Энергетика техникумĕ), Железняк (Хĕрачасен 1-мĕш номерлĕ шкулĕ), Астраханцева (Кооперации техникумĕ) тата Михайлова (ВЛКСМ хула комитечĕ) юлташсем тухса каларĕç.

Актив пухăвĕ Сталин юлташăн доклачĕпе приказне тĕплĕн вĕренни май тата Сталин юлташ кăтартса панисене пурнăçа кĕртсе пынă никĕс çинче комсомолăн хулари организацийĕн ĕçне лайăхлатмалли мероприятисене палăртса пачĕ.

### СОВЕТ ПРОФСОЮЗĔСЕН ДЕЛЕГАЦИЙĔ ФРАНЦИЕ ТУХСА КАЙНА

Францин Пĕтĕмĕшле Ĕç Конфедерацийĕ чĕннипе çак кунсенче Франције совет профсоюзĕсен делегацийĕ тухса кайнă. Делегаци составне çак юлташсем кĕреççĕ: Л. М. Соловьев.—ВЦСПС секретарĕ (делегаци руководителĕ). Н. А. Гайсенок —суднăсем тăвакан промышленноçри рабочисен профсоюзĕн Центральнăй Комитечĕн председателĕ. Н. И. Бахгорский— СССР-ăн çыхăну работникĕсен профсоюзĕн Центральный Комитечĕн председателĕ. Н. А. Гаврилов—аслă шкулсемпе наука учрежденийĕсен профсоюзĕн представителĕ. Т. К. Кошелева—делегаци секретарĕ.

Совет профсоюзĕсен делегацийĕ Францие кайни Франци профдвиженийĕн руководителĕсемпе куçăн курса калаçма, вĕсемпе туслă çыхăну пуçарса ярасси çинчен сӳтсе-явма тата Франципе Совет Союзĕнчи профсоюзсем пĕрлешсе ĕçлессин организациллĕ формисене тупса хума май парать.

### ГРИБОЕДОВ ЮБИЛЕЙНЕ ИРТТЕРМЕ ТУНА КОМИТЕТРА

Декабрĕн 16-мĕшĕнче Мускавра А. С. Грибоедов çуралнăранпа 150 çул тултарнине уявлама уйăрнă Пĕтĕм Союзри комитетăн ларăвĕ пулса иртнĕ.

Ларура вырăссен аслă писателĕн творчествине Совет Союзĕнчи ĕçхалăх хушшинче сарассипе çыхăнса тăракан ыйтусене сӳтсе-явнă.

Мускаври тата союзлă республикăсен издательствисем, наукăпа общество организацийĕсем юбилей тĕлне писателĕн произведенийĕсене пичетлесе кăлармалла, наукăллă сессисем тата вечерсем туса ирттермелле, выставкăсем уçмалла.

Писатель вĕреннĕ Мускаври университетра «Грибоедовпа унăн вăхăчĕ» темăпа лекцисем пулса иртеççĕ. Юбилей тĕлне «Грибоедов тата Мускаври университет» ятлă сборник тухать. Нумай театрсенче «Горе от ума» спектакле тепĕр хут лартма пуçлаççĕ. (ТАСС).

*Финанс планне тултарса çитермелли уйăхлăх*

## Плана кашни район тата пур тӳлевсем енĕпе те тултармалла

1944 çулхи финанс планне тултарса çитермелли уйăхлăх пуçланнăранпа 20 кун иртрĕ ĕнтĕ. Çак уйăхлăха хутшăнса, республикăри нумай районсем хăйсен ĕçне таткăланах лайăхлатрĕç. Октябрьски район укçа-тенкĕ пухмалли IV-мĕш квартални плана декабрĕн 16-мĕшĕ тĕлне 110.9 процент тултарса, республикăри малти вырăна тухрĕ. Вăл район плана налог укçи пухас енĕпе 124.9 процент, государство тупăшĕсен планĕ енĕпе 109 процент, укçапа япаласен 4-мĕш лотерейин билечĕсен укçине пухас енĕпе 112.1 процент тултарнă. Государство страховани укçине пухас тата перекет кассисем тĕлĕшпе кăна плана тултарса çитереймен. Вĕсене те çак çывăх кунсенчех пухса çитереççĕ.

Советски район та кварталти плана 100.7 процент тултарнă. Анчах та вăл районра налог, государство страховани, заем тата лотерея билечĕсен укçине нумай пухмалла. Çавăнпа та плана пĕтĕмĕшпех тултарнипе лăпланса лармалла мар, ăна кашни тӳлев тăрăх тултарса çитерессишĕн кĕрешмелле. Сĕнтĕрвăрри районĕ плана декабрĕн 19-мĕшĕ тĕлне 102 процент тултарнă. Вăл районри 13 ялсовечĕн налог агенчĕсем хăйсен планне тултарса çитернĕ тата 7 ялсовет тăрăх налог парăмĕсене татнă. Çавăн пекех Етĕрне районĕнчи 5 ялсовет та хăйсен планне тултарса çитернĕ.

Халăхран укçа-тенкĕ пухмалли плана пурнăçа кĕртсе çитерекен ялсоветсен хисепĕ кашни районрах кунран-кун ӳссе пырать.

Маттан кая юлса пынă районсем те лайăхрах ĕçлеме пуçларĕç. Декабрĕн 1-мĕшĕпе 16-мĕшĕ хушшинче налогпа страховка тата ытти тӳлевсен укçине Йĕпреç районĕнче 830 пин тенкĕ, Куславкка районĕнче 674 пин тенкĕ, Хĕрлĕ Чутай районĕнче 544 пин тенкĕ, Сĕнтĕр районĕнче 576 пин тенкĕ, Елчĕк районĕнче 808 пин тенкĕ пухнă.

Çав вăхăтрах финанс планне тултарса çитермелли уйăхлăха большевикла тимлĕхпе организацилемен районсем те пур-ха. Хăшпĕр руководительсем уйăхлăх хăй тĕллĕнех плана тултарма пулăшасси çине шанса тăраççĕ пулас. Вĕсем уйăхлăха лайăх ирттерессишĕн, уйăхлăх ыйтăвĕсем тавра анлă актива мобилизацилессишĕн кĕрешмеççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ декабрĕн малтанхи çур уйăхĕнче налогсемпе страховка укçине Улатăр районĕнче 255 тенкĕ, Куракино районĕнче 200 пин тенкĕ, Пăрачкав районĕнче 344 пин тенкĕ, Чурачăк районĕнче 377 пин тенкĕ, Вăрнар районĕнче 247 пин тенкĕ çеç пухнă. Первомайскипе Шăмăршă районĕсем укçа мĕн чухлĕ пухни çинчен сводка та вăхăтра парса тăмаççĕ.

Укçапа япаласен тăваттăмĕш лотерейин билечĕн укçине январĕн 1-мĕшĕ тĕлне пухса пĕтермелле. Апла пулин те Элĕк, Вăрнар, Комсомольски, Хĕрлĕ Чутай, Первомайски тата ытти хăшпĕр районсем юлашки вăхăтра лотерея билет укçине пухас тĕлĕшпе пачах та çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Квартал вĕçлениччен шутлă кунсем çеç юлчĕç. Çак кунсенче финанс планне пур тӳлевсем тăрăх та тата пĕтĕмĕшпех тултарса çитерес тесен, кая юлса пыракан районсен ĕç хăвăртлăхĕсене темиçе хут ӳстермелле. Канаш, Йĕпреç, Вăрнар, Комсомольски, Первомайски районсен государство тупăшĕсене пухассине, Чкаловски, Муркаш, Сĕнтĕр, Куславкка тата ытти хăшпĕр районсен страховани укçине пухассине, чылай районсен налог укçине пухассине таткăланах вăйлатмалла.

*Потребкооперацин отчетпа суйлав кампанийĕ*

## Ялпосен ĕçне вăйлатар

ШАХАСАН. Районри ялпосенче отчетпа суйлав кампанийĕ пуçланчĕ. Атнаш ялповĕ хăйĕн ĕçĕсем çинчен пайщиксем умĕнче отчет туса пачĕ. Пайщиксем пухусене активлăн хутшăнса, ялпо ĕçне тĕплĕн сӳтсе-яврĕç, ĕçри çитменлĕхсене палăртрĕç. Ялпо учительсене, служащисене çăнăх парса тăрас ĕçре чылай çитменлĕхсем пур, куллен кирлĕ вырăнти таварсене сахал сутнă.

Служащисем валли çăкăр пĕçерсе кăларас енĕпе халĕ те пысăк чăрмавсем пулса пыраççĕ. Район центрĕнче служащисем валли столовăй ĕçлемест.

Шăхасан ялповĕ таварçаврăнăш планне 9 уйăхра 158 процент, пай укçи пухмалли плана 288 процент тултарнă.

Сителл тата Сурăм отделенийĕсенче ĕçлекен продавецсем Конопацкаяпа Васильев юлташсем таварçаврăнăш планне кварталтан квартала ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Вĕсем 3-мĕш квартал планне 147—206 процент тултарнă. Лавкка комисси членĕсем продавецсене кулленех пулăшса пыраççĕ. Çав вăхăтрах Хурамал тата Мами отделенийĕсем пайщиксене потребкооперации ĕçне явăçтарман. Çавăнпа та ĕнтĕ кунта таварçаврăнăш планне те, пай укçи пухмалли плана та тултарайман. Мами отделенийĕнчи продавец Краснова ĕçе пĕтĕмпех япăхтарса янă.

Потребкооперации ĕçĕнче растратăсемпе кĕрешес ĕç те çителĕксĕр пулса пыратьха. Белов тата Мариенко продавецсем кооператив укçине 2300 тенкĕ таран çалатса янă, анчах вăл укçана шыраса илес тата айăплисене ответ тыттарас тĕлĕшпе нимĕн те туман.

Кибеч ялповĕ (председателĕ Шашкова юлташ) 1944 çулхи 9 уйăхри таварçаврăнăш планне 86 процент, пай укçи пухмалли плана 32 процент çеç тултарнă. Ку ялпо вырăнта туса кăларакан таварсене пĕрре те сутман.

Ялпосем начар ĕçлени ку ĕçре вĕсене райпотребсоюз çителĕксĕр ертсе пынинчен те нумай килет. Райпотребсоюз ялпосен ĕçĕ çинчен отчетсем лартса итлемен, çитменлĕхсене палăртса, вĕсене пĕтерме пулăшман.

А. АНТОНОВ

### СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

## СССР Верховный Совечĕн суйлавне тепĕр срока хăварасси çинчен

Вăрçă пирки СССР Верховный Совечĕн суйлавне 1945 çулхи декабрь уйăхĕччен хăварас, СССР-ăн пĕрремĕш Созыври Верховный Совечĕн полномочийĕсене вара çав срокчен тăсас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи декабрĕн 15-мĕшĕ.

## ВЦСПС-ра

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕ промышленноçăн пĕр отраслĕн заказĕсене пурнăçа кĕртекен предприятисен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи октябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завода иккĕмĕш преми памалла тунă.

### ЛАТВИРЕ ЯЛХУÇАЛАХ АКАДЕМИЙĔ УÇАЛНА

Латвире Ялхуçалăх академийĕнче занятисем пуçланнă. Академи çуртне—Иелгавăри двореца (ăна паллă архитектор Расстрелли тунă) нимĕçсем аркатса тăкса çунтарса янă. Ботаникăн пысăк садне тĕппипех пĕтеоне. Латви ССР-ĕн правительстви Рига варринче Академие 8 çурт уйăрса панă. Çавăн пекех тата Академие опытлă 8 хуçалăх тата кăтартуллă выльăх-чĕрлĕх ферми панă. Вăл фермăра 100 пуç ытла ăратлă выльăх шутланать. (ТАСС).

# Совет Информаци Бюровĕнчен

### ДЕКАБРĔН 18-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

**Декабрĕн 18-мĕшĕнче пирĕн çарсем Венгрире МИШКОЛЦ хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре çаплах наступлени туса пынă. ШАТОРАЛЬЯ-УЙХЕЛЬ хулинчен хĕвеланăçнерехри сăртлă-вăрманлă районта тăшмантан тасатнă, ГЕРНАД шывĕ çине тухнă, АЛШО КЕКЕД, АБАУЙВАР, ТЕЛКИБАНИА, ГЕНЦ, ШУЙТА, СУРДОК ялĕсене тата ГЕНЦ, ГИДАШНЕМАТИ чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ. Çавăнпа пĕр вăхăтрах МИШКОЛЦ хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 30 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—КАНИ, АНТАЛМАЙОР, ХИДВЕГАРДО, БОДВАШИЛЯС, СИН, ЭГЕРСЕГ, СУГАФЕ, МАЛЕ, ВАНРЕВЕ ялĕсем тата БОДВАШИЛЯС, ВАНРЕВЕ чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем, кăнтăр енчен пырса, Венгрипе Чехословаки чиккине 110 километр тăршшĕ фронтра тухнă, чикĕ урлă каçса кайса, Чехословаки çĕрĕнче БУЗИТА, РЕШТЕ, ЯНОК, ТУРНЯНСКА ВЕС, ВОДВАВЕС, ХОРБАТЫ, КЕСОВЦЕ, КЕРЕНЕЦ, АБОВЦЕ ялĕсене тата КАМЕНЭЦ чугун çул станцине тытса илнĕ.**

**Декабрĕн 17-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче МИШКОЛЦ хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районсенче пирĕн çарсем нимĕçсемпе венгерсен 1.850 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.**

**Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.**

☆ ☆ ☆

Венгрире пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Мишколц хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре сăртлă-вăрманлă вырăнти йывăр условисенче кĕрешекен совет чаçĕсем çапăçса 20 километр таран малалла кайнă. Тăшманăн уйрăм ушкăнĕсене Гернад шывĕ хĕррине хĕстерсе лартнă та çуррине ытла пĕтерсе тăкнă.

Мишколц хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем анлă фронтпа Венгрипе Чехословаки чиккине çитсе тухнă. Чикĕри укрепленисемпе усă курса, тăшман хытă хирĕç тăнă. Лайăх позицисем тытса тăракан нимĕçсем час-часах контратака тунă. Вĕсем унта совет çарĕсен наступленине чарма шутланă. Пирĕн чаçсем, çав тери хăвăрт пырса çапса, тăшман оборонине татнă та Венгрипе Чехословаки чикки урлă каçса кайнă. Пĕр районра пирĕн стрелковăй подразделенисем çĕрле тăшмантан аякран иртсе кайнă та, тылран сасартăк атакăласа, нимĕçсен резерври полкне аркатса тăкнă. Çитĕнĕве вăйлатса пырса, пирĕн çарсем Чехословаки çĕрĕнче халăх пурăнакан темиçе пункта йышăннă, вăл шутра — Кошице хулинчен 25 километр кăнтăр-хĕвеланăçнерехре лараканшоссе çулĕсен узелĕ пулса тăракан Янок ялне туртса илнĕ.

Мишколц хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем Слана шывĕ хĕрринчи Камецец чугун çул станцине туртса илнĕ. Çав районри çапăçура гитлеровецсене икĕ батальона çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем тăшман артиллерин 4 батарейин туппийсемпе тягачĕсене тытса илнĕ. Каялла чакакан нимĕçсем пĕр участокра виçĕ кĕпере сиктерсе яма хатĕрлесе хунă. Çавăн çинчен совет разведчикĕсем пĕлнĕ те Асхабадзе кĕçĕн лейтенантăн саперĕсене пĕлтернĕ. Пирĕн боецсем нимĕçсен кĕперсем патĕнчи хуралне сасартăк тапăнса пĕтерсе тăкнă. Разведчиксемпе саперсем çав виçĕ кĕпере вара советсен тĕп вăйĕсем çитиччен хăйсен аллинче тытса тăнă.

* * *

Хĕвелтухăç Пруссире пирĕн пехота отрячĕсем разведкăра шыраса çӳренĕ. Снайпер Буйняков засадăра тăнă чухне пĕр улăхра тăшман пехоти пухăнса пынине курнă. Вăл çавăн çинчен хăйĕн командирне пĕлтернĕ. Пирĕн минометчиксем нимĕçсем пухăнса тăнă вырăна пеме пуçланă. Гитлеровецсем улăхран хӳтĕлĕхе тарма пуçланă. Буйняков снайпер хăй винтовкипе виçĕ нимĕç салтакне персе вĕлернĕ.

* * *

Пултуск хулинчен кăнтăртарахра тăшман пĕр участокра пирĕн позицисене çапăçса пĕлме хăтланнă. Боевой охраненире тăракан совет боецĕсем нимĕçсене çывăхах янă та пăшалсемпе тата пулеметсемпе вăйлăн пеме тытăннă. Гитлеровецсем васкасах каялла чакнă. Вĕсенчен нумайĕшĕ пирĕн минăсем çине пырса кĕрсе сирпĕне-сирпĕне кайнă. Пирĕн позицисем умĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 60 виллине çити выртса юлнă.

Пирĕн самолетсен ушкăнĕ тăшман автоколоннине тапăннă. Бомбăсем пăрахса тата тупăсемпе, пулеметсемпе персе, совет летчикĕсем нимĕçсен 10 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Унтан малалла вĕçсе кайса, пирĕн летчиксем нимĕçсен чугун çул эшелонне атакăланă та 12 вагон çĕмĕрсе тăкнă.

* * *

Остроленка хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн подразделенисем совет позицийĕсем патне çывхарма хăтланнă гитлеровецсен темиçе ушкăнне сапаласа янă. Пĕр чаçри артиллеристсем тăшманăн икĕ блиндажне çĕмĕрнĕ, персе тăракан темиçе пулеметне пĕтерсе тăкнă, икĕ артиллери батарейине пусарса лартнă.

Совет бомбардировщикĕсем Цеханув тата Насельск чугун çул станцийĕсене тапăннă. Бомбăсем пăрахнине пула, чугун çул станцийĕсенче вăйлă пушарсем тухнă. Нимĕçсен эшелонĕсем тата çар склачĕсем çуннă. Пушарта темиçе вăйлă взрыв пулнă.

* * *

Украинăри 22-мĕш фронтра Куликовпа Муходинов офицерсем командир пулса ертсе пыракан разведка ушкăнĕсем çапăçса разведка тунă. Совет боецĕсем тăшман тăракан вырăна çав тери хăвăрт вăркăнса кĕрсе кайнă та нимĕçсем çине гранатăсем вăркăнтарма тытăннă. Алă вĕççĕн пуçланса кайнă тытăçура разведчиксем 30 гитлеровеца вĕлернĕ тата 6 станковăй пулемета пĕтерсе лартнă. Темиçе нимĕçе тыткăна илнĕ те разведка ушкăнĕсем хăйсен чаçĕ тăракан вырăна таврăннă.

# Чăваш халăхĕн наци тивĕçлĕхĕ çинчен

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче пур халăхсем те хаяр тĕрĕслӳ витĕр тухрĕç. Истори кашни халăхăн ĕçĕпе тивĕçлĕхне ун йышĕ пысăккипе пĕчĕккине кура мар е вăл мĕнле наци пулнине кура та мар хаклать. Истори, пуринчен малтан, этемлĕхĕн ылханлă тăшманне—нимĕç фашизмне пĕтерес тăкас ĕçе хăш халăх мĕн чухлĕ вăй хунине шута илет.

Наци тивĕçлĕхĕ вăл—нимĕçсен фашистла çынçиенсем вишекен «расса пахалăхĕ» мар; наци тивĕçлĕхне сăмсапа янах тĕрĕс пулнипе, куç—кăвак, çӳç—сарă пулнипе виçмеççĕ. Ним айăпсăр ачасемпе ватă çынсене чĕрĕллех çĕр айне пытаракан нимĕç палачĕн кăвак куçĕ йĕрĕнтерет кăна мар, вăл пирĕн воинсен чĕринче нимĕнпе лăплантарма çук хаярлăх çуратать. Çав фашистла вăрă-хурахăн кăвак-кантăк куçĕсенче наци тивĕçлĕхĕ мар, наци ирсĕрлĕхĕ палăрса тăрать. Нимĕç фашисчĕсем, тахçанах ĕнтĕ наци тивĕçлĕхне кăна мар, этем сăнне те çухатса, тискер кайăксен виçине çити анса ларнă. Сталин юлташ вăрçă пуçламăшĕнчех ĕнтĕ гитлеровецсене «павлин тĕкĕсемпе капăрланакан çăхансем» тесе ят панă.

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен тунă докладра Сталин юлташ, пирĕн совет çыннисем нимĕç захватчикĕсене мĕншĕн курайманнине палăртса, çав ирсĕрсене халăх сăмахĕпе питĕ витĕмлĕн пăталаса хучĕ: «Кашкăра вăл кăвак пулнă пирки мар, вăл сурăха çисе янă пирки хĕнеççĕ», терĕ вăл. Гитлеровецсен, çак ирсĕр реакционерсен, ушкăнĕ хăйĕн çынçиенле политикине пула, тĕнчери пĕтĕм халăхсене Германие хирĕç тăратрĕ, «суйласа илнĕ нимĕç расси» текен скер вара мĕнпур халăхсем курайман расса пулса тăчĕ.

Этемлĕх историне çичçĕр-сакăрçĕр çул каялла, Чингис-хан, Тамерлан ĕмĕрĕсенчен те аяккарах сĕтĕрсе кайма хăтланса пăхнă юнĕçен гитлеровецсен ячĕ ĕмĕрлĕхе ирсĕр ят пулса юлать, вĕсен «наци тивĕçлĕхĕ» мĕнпур халăхсен ылханĕпе витĕнет.

Пĕр-пĕр халăхăн наци тивĕçлĕхĕ вăл—çав халăхăн этемлĕх аталанăвĕнчи пархатарлă, таса та ырă ĕçĕ, унăн мĕнпур тăванла халăхсем умĕнчи чыслăхĕпе тӳрĕ кăмăллăхĕ, унăн мĕнпур этемлĕх культурипе наукине аталантарас ĕçри паттăрлăхĕ, пултарулăхĕ, таланчĕ пулса тăрать. Наци тивĕçлĕхĕ вăл—прогресс, аталану, ӳсĕм. Наци тивĕçлĕхĕ вăл—пĕр-пĕр халăх наци хуппи ăшне хупăнса ларса, ытти халăхсене кураймасăр пурăнни мар, çав халăх, хăйĕн хуçалăхĕпе культурине аталантарса пырса, мĕнпур халăхсен хуçалăхĕпе культурине, пĕтĕм этемлĕх обществине аталантарса пыма пулăшни.

Пирĕн Совет Союзĕнчи нумай тĕрлĕ нацисем хăйсен уйрăм автономийĕсене пĕтĕçсе пурăнаççĕ. Анчах çакă вăл çĕршыври халăхсене пĕр-пĕринчен уйăрса ямасть, пачах та урăхла, пĕр-пĕринпе татах та таччăнрах пĕрлештерет.

«Совет автономийĕ окраинăсене центрти Российăпа пĕрлештермелли чи тĕрĕс, чи конкретлăй форма пулса тăрать», тенĕ Сталин юлташ «Марксизм и национально-колониальный вопрос» ятлă кĕнекинче. Çакă вăл пирĕн çĕршыври тăванла халăхсен чи аслă тăванĕ—вырăс халăхĕ ытти мĕнпур халăхсен наци тивĕçлĕхне хисеплениие, вĕсене хăйсен государствисене—хăйсен автономийĕсене пĕтĕçсе пурăнма май панине пĕлтерет. Çакăн пирки ĕнтĕ пирĕн çĕршыври мĕнпур халăхсем аслă вырăс халăхне хисеплеççĕ, юратаççĕ, ун тавра таччăн пĕрлешсе тăраççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери империалистла пĕррремĕш вăрçă вăхăтĕнче тăшмансем большевиксене: вĕсен наци тивĕçлĕхне çӳлте тытас туйăм, патриотизм туйăмĕ çук, тесе ӳпкеленĕ. Ленин хăйĕн «О национальной гордости великороссов» ятлă статьинче çав элеке хаяррăн сирсе пăрахнă.

«Наци тивĕçлĕхне çӳлте тытас туйăм пире, великоруссен ăнланулла пролетарийĕсене, ют-и-ха?», тесе ыйтнă Ленин. Вăл çавăнтах çапла ответленĕ:

«Палламах, ют мар! Эпир хамăрăн чĕлхене, хамăрăн тăван çĕршыва юрататпăр, эпир пуринчен ытларах тăван çĕршыв ĕççыннийĕсен массисене (урăхла каласан, ун халăхĕн 10 пайĕнчен 9 пайне) демократсемпе социалистсен ăнланулла пурнăçĕ патне ӳстерсе çитерессишĕн ĕçлетпĕр», тенĕ.

Çав статьярах Ленин çапла çырнă: «Ытти халăхсене пусмăрлакан халăх ирĕклĕ пулма пултараймасть», тенĕ XIX ĕмĕрти чăн-чăн демократин чи аслă представителĕсем—Маркспа Энгельс...: Эпир те, великоруссен рабочийĕсем, наци тивĕçлĕхне çӳлте тытас туйăмпа çунакансскерсем кирек мĕнле пулсан та, ирĕклĕ те никама пăхăнмасăр, хăй тĕллĕн пурăнакан демократиллĕ, республикăллă, мăнаçлă Великороссисене туса хурассишĕн, хăй кӳршисемпе тытакан çыхăнусене аслă нацин ятне пăсакан привилегисен крепостникла принципĕ çинче мар, халăхсен пĕртанлăхне хисеплекен, этемле принцип çинче йĕркелесе тытакан Великоросси туса хурассишĕн тăратпăр» (Ленин, т. XVIII, стр. 81—82).

Çапла, «ытти халăхсене пусмăрлакан халăх ирĕклĕ пулма пултараймасть». Çакăн пек вĕрентсе пынă ĕнтĕ вырăс революционерĕсем вырăс халăхне, вырăс рабочи класне хăйсен малтанхи утăмĕсенченех пуçласах. Большевиксем вара наци ыйтăвне хăйсен программине кĕртнĕ.

Октябрьти социализмлă революци нацисен ыйтăвне çав тери ăнăçлăн татса пачĕ, халиччен урăх нимĕнле государство та çак ыйтăва çавăн пек тĕрĕс, кашнине хăй тĕллĕн пурăнмалла, çав вăхăтрах пĕр аслă пĕрлешӳллĕ государствăна аталантармалла татса пама пултарайман. Пирĕн çĕршыври пĕтĕм халăхсем пĕр союза—Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне пĕрлешрĕç.

Çакă вăл совет стройĕн чи пысăк çĕнтерĕвĕсенчен пĕри пулчĕ. Çак никĕс çинче пирĕн çĕршыври халăхсен туслăхĕ ӳссе çитĕнчĕ. Çак туслăх вара Совет Союзĕн вăй-хăват илмелли çăлкуçĕсенчен пĕри пулса тăчĕ.

«...ССР Союзĕнчи халăхсен туслăхĕ—пысăк та витĕмлĕ çĕнтерӳ,—тенĕ Сталин юлташ 1935 çулхи декабрĕн 4-мĕшĕнче Таджикистанпа Туркменистанăн малта пыракан колхозникĕсемпе колхозницисен канашлăвĕнче;—çав туслăх пур чухне пирĕн çĕршыври халăхсем ирĕклĕ те никам çĕнтерейми пулса тăраççĕ. Çав туслăх ырă та сывă пурăннă чухне пирĕншĕн никам та, шалти тăшмансем те, тулашри тăшмансем те хăрушă мар. Эсир çакăн пирки иккĕленмесен те пултаратăр, юлташсем».

Пирĕн çĕршыва наци ыйтăвне çавăн пек тĕрĕс татса пани, халăхсем пĕр-пĕрин наци тивĕçлĕхне хисеплени, пĕр-пĕрне ĕçпе кĕрешӳре пулăшни пире çак хаяр вăрçăра чи усал та хăватлă тăшмана хирĕç тăма, унăн чугун пуçне çапса имретсе, каялла сирсе ывăтма, юлашкинчен, ăна хамăрăн Тăван çĕршыв талккишĕсенчен сирпĕтсе кăларма май пачĕ.

«Совет патриотизмĕн вăйĕ çакăнта пулса тăрать,—терĕ Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен тунă докладра:—вăл рассăллă е нациллĕ тĕшмĕшлĕхсем çинче мар, халăх хăйĕн тăван совет çĕршывне пĕтĕм чун-чĕререн парăнса, тăван çĕршывшăн шанчăклă пулса тăни çинче. пирĕн çĕршыври мĕнпур нацисен ĕççыннийĕсем пĕр-пĕринпе тăванла та туслă пурăнни çинче никĕсленсе тăрать. Совет патриотизмĕнче халăхсен нациллĕ традицийĕсем тата Совет Союзĕнчи мĕнпур ĕççыннисен ирĕклĕхлĕ пурнăç интересĕсем таччăн пĕтĕçсе тăраççĕ. Совет патриотизмĕ пирĕн çĕршыври мĕнпур нацисемпе халăхсене пĕр-пĕринчен уйăрса тăмасть, пачах та урăхла, вĕсене пĕр тăванла çемьене пĕтĕçтерет».

Çапла, «совет патриотизмĕнче халăхсен нациллĕ традицийĕсем тата Совет Союзĕнчи мĕнпур ĕççыннисен ирĕклĕхлĕ пурнăç интересĕсем таччăн пĕтĕçсе тăраççĕ».

Пирĕн чăваш халăхĕн наци тивĕçлĕхĕ çинчен сăмах хускатсан, час-часах чăваш халăхĕ Октябрьти революциччен «мĕскĕн халăх, чĕлхесĕр халăх пулнă», «унăн нимĕнле историллĕ традицисем те çук», «унăн историйĕ çук» тенине илтме пулать. Çак сăмахсене пирĕн тăшмансем мар, пирĕн хăшпĕр юлташсемех калаççĕ. Тĕрĕс-и çав сăмахсем? Çук, пачах та тĕрĕс мар. Хытăрах каласан, вĕсем сиенлĕ те, мĕншĕн тесен вĕсем чăваш халăхне малалла аталантарма, унăн наци тивĕçлĕхне, унăн ĕçпе кĕрешӳри хастарлăхĕпе паттăрлăхне ӳстерме чăрмантараççĕ. Çырнă истори çукки вăл—чăваш халăхĕн историйĕ çуккине пĕлтермест, вăл пирĕн историксем вăйсăррине, вĕсем хăйсен наци тивĕçлĕхне, хăйсен тăван çĕршывпа тăван халăх умĕнчи парăмне тивĕçлĕ таран туйса тăманнине пĕлтерет. Çакă вăл пирĕн идеологи фронтĕнчи хăшпĕр çынсем хăйсен ответлăхне туйманни çинчен калать.

Пирĕн чăваш халăхĕн хăйĕн геройла историйĕ, хăйĕн паттăр кунçулĕ, хăйĕн пархатарлă традицийĕсем пур. Чăваш халăхĕн кунçулне историкĕн тĕрĕс те объективлă куçĕпе пăхса тухсан, вăл мĕн авалтан пуçласах чăваш халăхне вырăс халăхĕпе пĕрлешесси патне, иксĕлми совет патриотизмĕ патне илсе килет.

Чăвашсене вырăс летописĕнче малтанхи хут 1524 çулта Васильсурск хулин никĕсне тата 1551 çулта Свияжск хулин никĕсне хывнă май асăнаççĕ. Анчах ку пачах та чăвашсем çĕр çинче унччен пулманнине пĕлтермест. Археологсемпе историксем тĕпчесе палăртнă тăрăх, чăвашсем IX—XII-мĕш ĕмĕрсенче Атăл çинчи Пулхăр патшалăхĕнче пурăннă. Пире пăян ку мар пуринчен ытларах интереслентерет. Туран, Инди, Иран тата Хорезм çĕршывĕсенче пурăнакан культурăллă халăхсене малтан Чингис-хан, унтан Батухан аркатса тăкнă хыççăн, çак тутар-монгол çарĕсем XIII-мĕш ĕмĕрте чăвашсем пурăнакан Пулхăр патшалăхне пырса çапаççĕ. Атăлпа Камăн сулахай çыранĕнче пурăннă чăвашсем, тутар-монгол çарĕсенчен хӳтĕлĕх шыраса, Атăлăн сылтăм енчи чăнкă çыранне каçаççĕ. Камăпа Атăлăн сулахай кĕтесĕнче хальхи вăхăтра чăваш ялĕсем пăч-пач кăна тăрса юлни, чăвашсен пысăкрахĕш йышĕ Атăлăн сылтăм енче пурăнни çавăнтан килет те ĕнтĕ. Анчах Атăлăн сылтăм енне каçнă чăвашсем камра хӳтĕлĕх тупма пултарнă-ха?

Вырăс çĕршывĕ XIII-мĕш ĕмĕрĕн малтанхи пайĕнче уйрăм княжествăсене пайланса тăнă. Çав княжествăсем пĕр-пĕринпе хирĕçнĕ. Хĕвелтухăçĕнчен тутар-монголсем тапăннипе пĕрлех хĕвеланăçĕнчен XIII-мĕш ĕмĕрĕн пуçламăшĕнче нимĕç йытă-рыцарĕсем Балти тинĕсĕн тăрăхне тапăнса кĕнĕ.

Çак йывăр лару-тăруран вырăс халăхĕ чыслăн тухнă. Нимĕç йытă-рыцарĕсене хирĕç Новгородри çамрăк князь Александр Ярославич Невский вырăс çарĕсене пухса тăратнă та 1242 çулхи апрель уйăхĕнче Чудь кӳлли çинчи чаплă çапăçура çав нимĕç рыцарĕсене çапса аркатнă.

Çак йывăр вăхăтра Атăлăн сылтăм енне каçнă чăваш халăхĕ тутар-монгол çарĕсене мĕн чухлĕ хирĕç тăнине эпир пĕлместпĕр, анчах çичçĕр çул ĕлĕкрех Александр Невскин тăванĕ князь Андрей нимĕç йытă-рыцарĕсене хирĕç вăрçа тухма чăвашсем хушшинче çарсем пухни çинчен паянхи кунччченех халлапсемпе юрăсем çӳреççĕ. Çав халлапсем хут çине çыранман, анчах вĕсем халăх чĕринче ĕмĕрген-ĕмĕре сыхланса пынă.

Тутар-монгол çарĕсем малтан-малалла тапăнса пынă. Вĕсен пусмăрĕ айне чăвашсем, мăкшăсем, марисем, унтан Рязаньпе ытти çĕрсенчи вырăссем те лекнĕ. Чăваш халăхĕ, XIII-мĕш ĕмĕртен пуçласа XVI-мĕш ĕмĕре çитиччен, пĕтĕмпе 300 çул ытла. Ыттăн орда ханĕсен йывăр пусмăрне тӳссе пурăннă.

Çав ĕмĕрсенчи чи культурăллă патшалăхсене (Туран, Иран, Хорезм, Пулхăр т. ыт. те) аркатса тăкнă монгол завоевателĕсен ĕçĕсем, масштаб тĕлĕшĕнчен хальхи нимĕç фашисчĕсен тискер ĕçĕсемпе танлашаймасăр пулсан та, вĕсем монголсен «наци тивĕçлĕхĕ», хальхи гитлеровецсенни пекех, реакциллĕ халăхăн «наци тивĕçлĕхĕ» пулса тăнине кăтартса параççĕ.

Чăваш халăхĕ çăлăнăç шыранă. Унăн хăйĕн çав пусмăртан тухма вăйĕ çитмен. Вăл хĕвеланăçнелле, вырăс çĕрĕ çинелле çавăрăнса пăхнă.

Хăватлă вырăс государствине пухса йĕркелес ĕçре Иван Грозный çав тери пысăк та прогрессиллĕ вырăн йышăнса тăрать. XVI-мĕш ĕмĕрте чăваш халăхĕ вырăс государствине кĕрет, çапла вара вăл тутар ханĕсен асаплă пусмăрĕнчен хăтăлать, çапла чăваш халăхĕ хăйĕн кунçулне ĕмĕрлĕхех вырăс халăхĕн кунçулĕпе çыхăнтарать. Малашне вăл хăйĕн мирлĕ пурнăçне вырăс халăхĕн хӳттинче туса пырать.

Çапла тунипе чăваш халăхĕн наци тивĕçлĕхĕ çухалать-и-ха? Çук, пачах та урăхла. Вăл хăйĕн наци тивĕçлĕхне аслă вырăс халăхĕн хӳттинче кăна упраса хăварма май тупнă. Ахаллĕн пирĕн пек сахал йышлă халăхсене ют çĕртен килнĕ тăшмансем тахçанах пĕтерсе тăкма пултарнă.

Халăхăн историри вăрăм кунçулне пăхса тухсан, эпир чăваш халăхĕ Атăл çинче 1524 çулта Васильсурск крепоçне тунă çĕрте, 1551 çулта Свияжск крепоçне тунă çĕрте ĕçленине, чăваш халăхĕн ывăлĕсем Иван Грознăйăн çарĕнче тутар ханĕсене хирĕç çапăçнă çĕрте, 1560-мĕш çулсенче нимĕç меченосецĕсен Ливони орденне хирĕç çапăçнă çĕрте пулнине куратпăр. Çак ĕçсем пирĕн халăхăн историри тивĕçлĕхне çĕклеççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем прогрессиллĕ ĕçсем пулнă.

XVII-мĕш ĕмĕрĕн пуçламăшĕнче пирĕн Тăван çĕршыва поляксемпе швед интервенчĕсем тапăнсан, чăваш халăхĕ, Кузьма Минин чĕннипе, Чулхула ополченине хутшăннă. Дмитрий Пожарский çарне паттăр воинсем панипе пĕрлех, чăваш халăхĕ çар валли тырпул, апат-çимĕç, пир-авăр, тир-сăран парса тăнă.

Вырăс государствине малалла тĕреклетес, ăна тĕнче культурин аталану çулĕ çине кăларас тĕлĕшпе 1-мĕш Петр хăй саманинче аслă ĕçсем пурнăçа кĕртнĕ. Çавăнпа та эпир пирĕн чăваш халăхĕ Петроград хулин никĕсне хывнă çĕрте, тин çуралакан вырăс флочĕ валли чăваш вăрманĕсенчен авăххи кĕреш-юмансем касса турттарнă çĕрте тар юхтарса ĕçленине те пирĕн халăхăн наци тивĕçлĕхне çĕклекен ĕç вырăнне хурса хаклама пултаратпăр.

1756 çулта Пруссипе Россия хушшинче вăрçă пуçланнă. Çав вăрçă çичĕ çул хушши тăсăлнă. Вăл Пруссин каппайчăк королĕн II-мĕш Фридрихăн çарне çапса аркатнипе, вырăс çарĕсем Берлина туртса илнипе вĕçленнĕ. Паттăр вырăс çарĕсен ретĕнче чăваш халăхĕн ывăлĕсем те пулнă. Çакăнпа та эпир тивĕçлипе мухтанма пултаратпăр.

1812 çулхи Отечественнăй вăрçăра, Наполеонăн çарĕсене хирĕç çапăçнă çĕрте, пирĕн халăх вырăс халăхĕпе пĕрле тунă паттăр ĕçсем пирĕн наци тивĕçлĕхне малалла ӳстерсе пыраççĕ.

Эпир Российăна яланах хамăрăн Тăван çĕршыв тесе шутланă. Çавăнпа Россия çĕршывĕ умне тухса тăнă хăрушлăх яланах пирĕншĕн те хăрушлăх пулнă. Вырăс çĕрĕ çине тăшман тапăнсан, вырăс халăхĕпе пĕрле пирĕн чăваш халăхĕ те пĕрлехи тăшмана хирĕç яланах кĕрешĕве çĕкленнĕ.

Анчах чăваш халăхĕн, вырăс халăхĕнни пекех тата пирĕн çĕршыври ытти халăхсенни пекех, хăйĕн шалти тăшманĕ—патша тытăмĕ, помещиксемпе капиталистсен стройĕ пулнă. Патша влаçĕ пĕтĕм халăхăн вăй-хăватне пусарса тăнă, хăйне сирпĕтсе антарассинчен хăраса, патша влаçĕ халăхсене пĕр-пĕринпе хирĕçтерме, вăрçтарма тăрăшнă. Çаксем пурте пирĕн çĕршыв хăватне хавшатнă.

Çавăнпа та пусмăрлăхпа чуралăха хирĕç, ирĕклĕхшĕн пирĕн чăваш халăхĕ татах вырăс халăхĕпе, çĕршыври ытти мĕнпур халăхсемпе пĕрле, Разинпа Пугачев пăлхавĕсене çĕкленнĕ, 1905—1907 çулсенчи революцие хутшăннă.

1917 çулхи Октябрьте пирĕн çĕршыври халăхсем, большевиксен аслă партийĕ ертсе пынипе, вырăс рабочи класĕ пуçпулса тăнипе, помещиксемпе капиталистсен влаçне сирпĕтсе антарчĕç те рабочисемпе хресченсен социализмлă государствине туса хучĕç.

Çапла пирĕн çĕршыври вырăс рабочи класĕ, империализм пусмăрĕнчен ирĕке тухма туртăнакан мĕнпур халăхсемпе пĕрлĕхлĕ революциллĕ фронт туса хурса, буржуаллă строя аркатса тăкрĕ те социализмлă стройăн никĕсне хыврĕ.

Тăван çĕршыври пур халăхсем те ирĕке тухрĕç, пĕртанлăх прави тупрĕç.

Çапла эпир пирĕн чăваш халăхĕ хăйĕн историллĕ вăрăм кунçулĕнче хăйĕн наци тивĕçлĕхне яланах çӳлте те таса тытса пынине куратпăр. Вăл Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне, унăн чысĕпе чапне яланах вырăс халăхĕпе пĕрле тӳрĕ кăмăллăн, паттăррăн хӳтĕлесе пынă. Историллĕ тата художествăллă литературăра нумай тĕрлĕ писательсемпе тĕпчевçĕсем чăваш çыннисен паллăрах енĕсене палăртнă чухне, ялан тенĕ пекех чăваш çынни тӳрĕ кăмăллă та ĕçчен çын пулнине кăтартса параççĕ. Çак пахалăхсем вĕсем пирĕн халăхпа ытти халăхсем хушшинчи туслăха çирĕплетмелли нумай тĕрлĕ майсенчен пĕрисем тата чи кирлĕреххисем пулса тăраççĕ.

**Аркадий ЭСХЕЛЬ.**

(Юлашки çитес номерте пулать).

*СУРАКИНЕ БОЛЬШЕВИКЛА КĔТСЕ ИЛЕР!*

## Тракторсене çак кунсенчех юсаса пĕтеретпĕр

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, декабрĕн 19-мĕшĕ. (Телефонпа). МТС коллективĕ тракторсене тата вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене юсама тытăнсан, çак ĕçе 1945 çулхи январĕн 10-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех юсаса пĕтерме сăмах панăччĕ. Тракторсене юсакан работниксемпе трактористсем хушшинче çакăн хыççăн социализмлă ăмăрту пуçланса кайрĕ.

Çак ăмăрту хăйĕн паха тĕслĕхĕсене кăтартрĕ. Пирĕн МТС тăваттăмĕш кварталта тракторсене юсамалли плана срокчен тултарчĕ. Халĕ ĕнтĕ МТС мĕнпур тракторсене пĕтĕмпех юсаса пĕтерессишĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçлет. Пирĕн МТС-ра 13 трактор бригади, вĕсенчен 10-шĕ хăйсен тракторĕсене пĕтĕмпех юсаса пĕтерчĕç. Хĕрарăмсен 8-мĕш трактор бригади (бригадирĕ У. Николаева), 9-мĕш бригада (бригадирĕ Е. Иванова), 13-мĕш бригада (бригадирĕ Я. Васильев), 12-мĕш бригада (бригадирĕ В. А. Афанасьев) тата 6-мĕш трактор бригади (бригадирĕ Ф. Егоров) пур тĕрлĕ машинăсене те юсаса пĕтерчĕç.

Пĕтĕмпе 35 трактор, 25 плуг, 10 сеялка, 10 культиватор юсанă. Государство комиссийĕ çав тракторсенчен 24 тракторне лайăх юсанă тесе йышăннă. Ыран государство комиссийĕ тата 11 трактор ăн пахалăхне тĕрĕслет.

Пирĕн тата 3 трактор юсамалла. Ку ĕçе эпир çывăх кунсенчех вĕçлетпĕр. Çакăн хыççăн вара пирĕн МТС коллективĕ тракторсенчен кăкарса ĕçлемелли тата ытти машинăсене юсама тытăнать.

Тракторсемпе машинăсене юсас ĕçре запаслă пайсем çукки пысăк йывăрлăхсем кӳчĕ. Вăл йывăрлăхсене эпир хамăрах кивĕ пайсене юсаса çĕнетнипе тата çĕннисене хамăр мастерскойсенче тунипе çĕнтерме пултартăмăр. Эпир запаслă пайсене 5.500 тенкĕлĕх тата кивĕ пайсене 13.500 тенкĕлĕх çĕнетрĕмĕр.

**Н. КОНСТАНТИНОВ,**
**МТС директорĕ.**

### *28 трактор юсанă*

ЕЛЧĔК, декабрĕн 19-мĕшĕ. (Телефонпа). МТС коллективĕн тăваттăмĕш кварталти план тăрăх 26 трактор юсамалла пулнă. Паянхи кун тĕлне 28 трактор юсанă.

## Советски район çуракине çителĕксĕр хатĕрленет

Чăваш АССР Совнаркомĕ çак кунсенче Советски районри колхозсем çуракине мĕнле хатĕрленнине пăхса тухрĕ, çак район çуракине çителĕксĕр хатĕрленнине палăртрĕ. Вăрлăх фондне çак вăхăта çитсе те хывса çитермен, тĕштырăсем 67 процент, çĕрулми 63 процент, кантăр вăрлăхĕ 77 процент, клевер вăрлăхĕ 13 процент кăна хывнă. Районри 17 колхоз вăрлăхсене сортлама пачах тытăнман. Вăрлăх тасатмалли мĕнпур машинăсемпе туллин усă курмаççĕ, вĕсене чылайĕшне юсаман.

Чылай колхозсенче пăрса йышши тырăсем тата кантăр вăрлăхĕсем çитмеççĕ. Апла пулсан та, вăрлăх хатĕрлес тĕлĕшпе çак колхозсем нимĕн те тумаççĕ. Вăрлăхлăх уйăрнă тырăсене акт çырса уйăрман тата кладовщиксен аллине сыхласа усрама паман. «Ударник», «Коминтерн», Володарский ячĕпе тăракан тата ытти чылай колхозсенче те вăрлăх участокĕсенчен пухса илнĕ тырăсене ытти тырăсемпе пăтраштарса янă. Вăрлăхлăх клевера шĕкĕлчес енĕпе ытла та начар ĕçлеççĕ. Ялхуçалăх машинисене юсамалли, вырăнти удобренисем пухмалли тата уя тислĕк кăлармалли плана колхозсем патне çитермен.

Чăваш АССР Совнаркомĕ райсовет исполкомĕн председательне Малинин юлташа тата районри çĕрĕç пайĕн заведующине Ятманов юлташа çаксене тума хушрĕ:

Декабрĕн 20-мĕшĕччен кашни колхозрах вăрлăх фончĕсене хывса çитермелле, вăрлăхлăх тырăсене тасатма массăллăн тытăнмалла, тырă тасатакан мĕнпур машинăсене ĕçлеттермелле. Ятарласа тырă тасатакан обозсем тумалла, вĕсен шутне сортировкăсем, змейка тата икĕ триер кĕртмелле. Вăрлăхлăх клевера шĕкĕлчесе пĕтерсе, вăрлăх фондне клевер çителĕклĕ хывмалла.

Вырăнти удобренисене пухас тата уя кăларас ĕçе организацилемелле. Правительство кăтартнă срок тĕлне кашни колхозах хăйĕн планне тултармалла.

Ялхуçалăх машинисене юсама халех тытăнмалла. Тимĕрçĕсем çук колхозсене тимĕрçĕ лаççисем тата тимĕрçĕсем пур колхозсем çумне çирĕплетмелле.

Агротехникăна вĕренмелли курссене халех уçмалла, çак ĕçе ертсе пыма ялхуçалăх специалисчĕсене явăçтармалла.

## Агротехникăпа зоотехника кружокĕсем

ÇĔРПУ, декабрĕн 19-мĕшĕ. (Телефонпа). «Емĕт» колхозра çак кунсенче агротехникăна тата зоотехникăпа ветеринарие вĕренмелли кружоксем ĕçлеме пуçларĕç. Унта бригадирсемпе ăкакансем, животноводсем тата ыттисем те, пурĕ 34 çын, вĕренме çӳреççĕ. Занятисем эрнере икĕ хут пулса иртеççĕ. Халĕ 3—4-шар заняти ирттерне. Вĕсенче зоотехниксемпе агрономсем вĕрентеççĕ.

**П. ПАВЛОВ.**

## Совет Союзĕпе Франци пĕр-пĕринпе союзлă пуласси тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен тунă договор пирки ют çĕршывсенче мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, декабрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви Парижран пĕлтернĕ тăрăх, паянхи ирхи хаçатсем Совет Союзĕпе Франци пĕр-пĕринпе союзлă пуласси тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен тунă договор пирки уйрăмăнах нумай çыраççĕ. Хаçатсен умстатьисенче договор çине алă пуснине хавассăн саламлаççĕ. Вăл договора хаçатсем «Франци хăрушсăрлăхĕн тĕп никĕсĕ» тесе хаклаççĕ. Хаçатсем уйрăмăнах çакна палăртаççĕ: çак союз, теççĕ вĕсем, икĕ çĕршывăн союзĕ кăна мар, вăл ушкăнла хăрушсăрлăхăн пĕтĕм тĕнчери системин пĕр пайĕ пулса тăрать, теççĕ.

ПАРИЖ, декабрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио пĕлтернĕ тăрăх, Совет Союзĕпе Франци пĕр-пĕринпе союзлă пуласси тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен тунă историллĕ договора саламламан пĕр француз хаçачĕ те çук.

«Фран-Тирер» хаçатра Альбер Байе çапла çырать: Франципе Совет Союзĕ тунă договор пулас мирлĕ пурнăçа тата тĕнчери хăрушсăрлăха çирĕплетме пулăшать. Çав договор Германин агрессиллĕ ĕçĕсене чарса тăракан чăрмав вырăнĕнче пулĕ, вăлах фашизм çуралса ӳсессине чарса лартĕ. Çак договора тунипе Сталин Маршал тата Франци Республикин Вăхăтлăх Правительствин пуçлăхĕ де Голль генерал пит пысăк ĕç тунă. Вĕсене Франципе Совет Союзĕнчи халăхсем кăна мар, пĕтĕм этемлĕх тав тăвать.

ЛОНДОН, декабрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи пичечĕ Совет Союзĕпе Франци договорне саламлать. Хаçатсем договора Европăна тата пĕтĕм тĕнчене йĕркене кĕртекен вăй вырăнне хурса хисеплеççĕ. Думбартон-Оксра пĕтĕмĕçле хăрушсăрлăх пирки тунă плана çак договор нихăш енчен те хирĕç пымасть, тесе палăртаççĕ хаçатсем.

### ДЕПАРТАМЕНТ КОМИТЕЧĔСЕН СЪЕЗЧĔ СОВЕТ СОЮЗĔПЕ ФРАНЦИН ДОГОВОРНЕ ЫРЛАНĂ

ПАРИЖ, декабрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио пĕлтернĕ тăрăх, департамент комитечĕсен съезчĕ де Голль генерал патне послани янă. Вăл посланире съезд Совет Союзĕпе Франци пĕр-пĕринпе союзлă пулса пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен тунă договора ырланă. Резолюцире çакна палăртса хăварнă: вăрçă ĕçне малалла та ăнăçлăн туса пыма тата çĕнĕрен ирĕклĕ те çирĕп Франци туса хума Франци республикин Вăхăтлăх Правительствин пуçлăхне делегатсем пурте шанаççĕ, тенĕ.

## Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ декабрĕн 18-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Моншау хулинчен пуçласа Германипе Люксембург чиккин кăнтăрти вĕçне çитиччен пыракан участокра çапăçусем çивĕчленсе кайнă. Тăшман хăйĕн атакисене вăйлатса пырать. Халĕ çапăçăва пехотăпа танксем кĕрсе кайнă. Хăшпĕр секторсене тăшман парашютистсен пĕчĕк ушкăнĕсене антарнă. Гонсфельд çывăхĕнче, Вианден хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата Эхтернах хулинчен кăнтăртарахра нимĕçсем çитĕнӳсем тунă. Тăшман хăйĕн çĕр çинчи атака тăвакан çарĕсене сывлăшран пулăшса пыма хăтланнă. Çав операцисем вăхăтĕнче союзниксен авиацийĕ нимĕçсен 108 самолетне пĕтерсе тăкнă, союзниксен 133 истребитель пĕтнĕ.

Саар шывĕ улăхĕнче союзниксен çарĕсем Диллинген хулипе Саарлаутерн хули районĕсенче çаплах малалла куçса пынă. Çавăн пекех тата Бальсхейм хулинчен çурçĕртерехре те çитĕнӳ тунă. Битша хули районĕнче Мажино линийĕн форчĕсене тытса илессишĕн çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ. Виссенбург хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен чаçĕсем Германи çĕрĕнче нимĕçсен темиçе ялне туртса илнĕ.

Вогез тăвĕсем çинче союзниксен çарĕсем Кайзерсберг хулине ирĕке кăларнă. Эльзас тӳременче тăшман вăйлă контратакăсем тунă хыççăн союзниксем кăштах каялла чакнă.

Чылай пунктсенче союзниксем халĕ Зигфрид линийĕ умĕнче тăраççĕ.

Союзниксен авиацийĕ Зигфрид линийĕн укрепленийĕсене, чугун çулсене тата тăшман транспортне атакăланă.

### СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, декабрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: Американецсен «Вĕçекен крепость» йышши 500 бомбардировщикне яхăн, 600 истребитель ытла хӳтĕлесе пынипе, Кельн, Кобленц, Майнц хулисенчи тата Германин ытти районĕсенчи сортировка станцийĕсене тапăннă.

Акăлчансен «Ланкастер» йышши бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕ декабрĕн 18-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Мюнхен хули çине бомбăсем пăрахнă. Паян ирхине Англи бомбардировщикĕсем Дуисбург хулине вăйлăн тапăннă.

### *Американецсен 1-мĕшпе 9-мĕш армийĕсен фронтĕнчи çапăçусем*

ЛОНДОН, декабрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен радиостанцийĕ пĕлтернĕ тăрăх, американецсен 1-мĕшпе 9-мĕш армийĕсен фронтĕнче нимĕçсем хирĕçле наступлени пуçласа янă. Наступлени декабрĕн 17-мĕшĕнче ирхине ирех пуçланса кайнă. Нимĕçсем малтан парашютсемпе десант антарнă, хăйсен наступленине артиллерирен хăватлăн персе хатĕрленĕ. Декабрĕн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле американецсен 9-мĕш армийĕ тăракан позицисем çинче нимĕçсен 300 самолечĕ пулнă. Нимĕçсен главнокомандующийĕ фон Рундштедт хăйĕн çарĕсене юлашки хут пĕтĕм вăя пухса çапăçма чĕннĕ.

Декабрĕн 17-мĕшĕнче кăнтăр тĕлнелле нимĕçсем американецсен çарĕсем тăракан вырăна темиçе километр шăлалла кĕрсе кайнă. Темиçе тĕлте вĕсем Бельги тата Люксембург чиккисем урлă каçса кайнă.

Американецсен 9-мĕш авиакорпусĕ декабрĕн 17-мĕшĕнче тăшман çарĕсене вăйлăн атакăланă. Нимĕçсен 60 танкĕпе автомашинине ытла пĕтерсе тăкнă.

## Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнче

ЛОНДОН, декабрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ декабрĕн 18-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: 8-мĕш арми чаçĕсем Фаэнца хулине тăшмантан пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех тасатса пĕтернĕ. Хулан çурçĕр пайĕнче кăна тăшманăн пĕр-пĕринчен таталса кайнă хирĕç тăракан узелĕсем тăрса юлнă.

Декабрĕн 16-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Специрен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри Меско патĕнче акăлчансемпе американецсен пĕрлешӳллĕ тинĕс-çар вăйĕсем тăшманăн хуралта çӳрекен суднисене тапăннă. Тăшманăн виçĕ суднине пĕтерсе тăкнă.

Американецсен йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, декабрĕн 17-мĕшĕнче Германи Силезийĕнчи, Чехословакири Моравска-Острава хулинчи нефть завочĕсене тата Австрири вăрçă объекчĕсене тапăннă.

### ГИТЛЕРЛА ХАÇАТ ÇУХАРАШНИ

СТОКГОЛЬМ, декабрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Фронтра тухакан «Штосструппа» ятлă гитлерла хаçат пăшăрханса çапла çырать: «Тăшман вăйлă хĕссе пынипе хăшкăлă йышши хĕçпăшала нумай çухатма тивет». Хаçат салтаксене—хĕçпăшалан пăрахăр, тесе ӳкĕтлет. «Эпир юлашки йывăр çапăçусенче мĕн чухлĕ хĕçпăшал пăрахса хăварнине куратпăр, тыпра çав хĕçпăшала тума мĕн тĕрлĕ йывăррине эпир пĕлсе тăратпăр»,—тесе çырать хаçат.

Юлашкинчен хаçат салтаксене çапла хăратать: хĕçпăшала упраманшăн йывăр наказани парасси çинчен командовани уйрăм приказ кăларчĕ, тет.

## Грецири лару-тăру

ЛОНДОН, декабрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радион Афины хулинчи корреспонденчĕ паян кăнтăрла пĕлтернĕ тăрăх, юлашки 24 сехет хушшинче Греци столицинче лăпкă пулнă. Çав лăпкăлăх ЭЛАСпа Скоби генерал пĕр-пĕрне перемири условийĕсем панипчен килет пулĕ, теççĕ. Англи самолечĕсем Афины хулинчи радиостанцине тепĕр хут пырса тапăннă. Малтан пырса тапăннă хыççăн вăл каллех ĕçлеме пуçланă пулнă. Халĕ ĕнтĕ передатчик юрăхсăра тухрĕ пуль, теççĕ.

Скоби генерал пĕлтерĕвĕнче каланă тăрăх, Англи çарĕсем Пирейре татах малалла куçнă. Партизансем атакăланă Инди çарĕсене тинĕспе илсе кайнă.

Корреспондент каланă тăрăх, партизансемпе Англи командованийĕ пĕр-пĕрне панă перемири условийĕсем хирĕçĕве татса парĕç тесе ĕмĕтленме пулать. ЭЛАС руководителĕсем Скоби генералăн пĕррремĕш условийĕпе — хăйсен чаçĕсене Аттикăран кăларса каймаллипе—килĕшнĕ. Афины хулинчен Греци правительствин çарĕсене те кăларса кайма ЭЛАС ыйтнине хирĕç Скоби генерал çапла ответленĕ: вăл çарсене эпĕ хăйсен Афины хулинчи казармисене каялла тавăрăнма приказ пама килĕшетĕп, тенĕ. Скоби генерал Аттикăран тухса кайнă партизансене хĕçпăшалсăрланма хушмасть. Анчах та вăл Афины хулипе Пирейри ЭЛАС майлисене, хирĕçме чарăнса, хĕçпăшала пăрахма хушать. Çак услови, тесе çырать корреспондент, хирĕçĕве татса пама кансĕрлекен тĕп чăрмавсенчен пĕри пулса тăма пултарать, тет. Афины хулинче 10.000 çынна яхăн ЭЛАС майлă çапăçаççĕ.

ЛОНДОН, декабрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Англин Грецири çарĕсен командующийĕн Скоби генералăн штабĕ пĕлтернине парать. Унта çапла каланă: Пирейпе Фалерон районĕсенче Англипе Инди çарĕсем юлашки талăкра чылай пысăк çитĕнӳсем тунă. Çавăн пирки те Фалеронпа Пирей хушшинчи çыран хĕррипе пыракан çула тата Фалеронпа Афины хушшинчи тĕп çула контроллесе тăрас ĕç лайăхланать. Фалеронпа Афины хушшинчи çула партизансен чаçĕсен пысăк мар вăйĕсем тытса тăраççĕ. Декабрĕн 18-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле партизансем, артиллери пулăшнипе, Грецин сывлăш-çар флочĕн штабне хирĕç вăйлă атака пуçласа янă. Çапăçусем халĕ те пыраççĕ-ха. Салоникăра тата Патрăра паллă улшăнусемех пулман. Волос районĕнчи партизансен пысăк чаçĕсен командующийĕ союзниксен пулăшакан чаçĕсене тата индиецсен пысăк мар гарнизонне, хуларан тухса кайма хушса ультиматум панă.

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, официальнăй йĕркепе çакна пĕлтернĕ: Эгей тинĕсĕнче грексен Сирос, Наксос, Парос тата Идра утравĕсем çинче ЭЛАС чаçĕсене хĕçпăшалсăрлатнă та арестленĕ.

### ФРАНЦИРИ ДЕПАРТАМЕНТСЕНЧИ ИРĔКЛĔХ КОМИТЕЧĔСЕН СЪЕЗДĔНЧЕ

ЛОНДОН, декабрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви Парижран пĕлтернĕ тăрăх, департаментсенчи ирĕклĕх комитечĕсен съездĕнче тухса калакансенчен нумайĕшĕ тасату ĕçне хăвăртлатма ыйтнă. Вĕсем каланă тăрăх, Францин хăшпĕр районĕсенче «пиллĕкмĕш колонна» пур.

Съезд Францири тăшмана хирĕçле движени Грецин Наци фрончĕпе тата Польшăри Халăхăн Ирĕклĕх Комитечĕпе пĕр шухăшлă пулни çинчен резолюци йышăннă.

## СБОРОНА ФОНДНЕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Мăн Шетмĕри вăтам шкулта вĕренекенсемпе учительсем хăйсен пухăвĕнче Куславкка районĕнчи çамрăксем чĕнсе каланине сӳтсе яврĕç. Çак патриотла пуçарăва пĕр кăмăлпа ырласа, Тăван çĕршыв оборонин фончĕ валли укçа-тенкĕ пухас ĕçе тытăнчĕç. Вĕсем кĕске вăхăтрах 1.900 тенкĕ укçа, 160 тенкĕлĕх государство заемĕсен облигацийĕсене пухрĕç. 8-мĕш класра вĕренекен А. Иванов 30 тенкĕ, А. Арсентьева 20 тенкĕ, 3-мĕш класра вĕренекен З. Петрова 15 тенкĕ, Ф. Яковлевăпа З. Федорова 13-шер тенкĕ пачĕç. Укçа пухасси малалла пырать.

**И. ХАТАЕВСКИЙ.**

## *Икĕ письмоносец*

КАНАШ. Яманкассинче çырусемпе хаçатсем салатас ĕçре 4 çул хушши ĕнтĕ Игнатьева юлташ ĕçлет. Вăл хăйĕн ĕçне тăрăшса тăвать. Почтăри çырусемпе хаçатсене вăхăтра кайса илет те çийĕнчех адрессем тăрăх салатать. Çар çыннисен çемьисемпе Отечественнăй аслă вăрçă инвалидĕсене пособи вăхăтра илме пулăшать. Колхозниксемпе колхозницăсем хирте ĕçленĕ вăхăтра вăл çырусемпе хаçатсене хирех илсе пырса паратчĕ. Унсăр пуçне хаçатсем çинчи çĕнĕ хыпарсене вуласа паратчĕ. Çавăнпа та Яманкассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Игнатьева юлташа юратаççĕ тата хисеплеççĕ, чи хаклă хăнана кĕтнĕ пекех кĕтеççĕ.

Анчах та начар ĕçлекен письмоносецсем те районра сахал мар-ха. Акă, Кивĕ Шелттемри Иванов письмоносецах илер. Вăл хăйĕн ĕçне йĕркеллĕ тăвассишĕн пĕртте тăрăшмасть. Колхозницăсем ĕçлекен çĕрте пулмасть, укçа-тенкĕ перевочĕсене час валеçмест. Хăй ӳрĕк-сӳрĕк ĕçленипе колхозниксемпе колхозницăсене тарăхтарать.

Районри письмоносецсем Игнатьева юлташран пример илмелле.

**И. П.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ. г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторан — 0—67, заместительне секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

НТ 04268. Типография № 1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф 6. 59×42 п. д. Тираж 16.000 экз.